Уйкас Кипек территори пайĕ

#регпроекты #нацпроекты

# ПАЯНХИ ЯЛ

Проект Вăрнар муниципаллă округĕ пулăшнипе пурнăçа кĕрет

Уйкас Кипек территори пайне çак ялсем кĕреççĕ: Уйкас Кипек, Вăрман Кипек, Енĕш, Кивçурт Енĕш, Услантăр Енĕш, Çĕн Сăрьел.

## Патшалăх пулăшăвĕ вăй илсе аталанма май парать

**Уйкас Кипек территори пайĕ ултă яла пĕрлештерет. Пĕтĕмпе 608 кил-çурт шутланать, вĕсенче 883 çын пурăнать.**

Ун территорийĕнче икĕ клуб, пĕтĕмĕшле практика врачĕн пĕр офисĕ, икĕ ФАП, пĕр клуб, Калинино райповĕн пĕр, уйрăм çыннăн икĕ магазинĕ, чиркӳ вырнаçнă.

Ку тăрăхра çĕр ĕçне юратакан çынсем пурăнаççĕ, хуçасăр выртакан çĕрсем çук. «Луч» хуçалăх ырă ятра. Вăл тырă çитĕнтерессипе тата сыснасем ĕрчетессипе тимлет. Çавăн пекех Виталий Яковлев фермер та юлашки çулсенче выльăх-чĕрлĕх отраслĕне аталантарассипе хытах тăрăшать. Андриан Григорьев, акă, гидросооружение арендăна илнĕ – пулăсем ĕрчетсе сутать. А.Кошкин тырă-пулă ӳстерет.

– Территори пайĕнче ултă ял кăна. Апла пулин те татса памалли ыйтусем сахал мар. Çакă савăнтарать – вĕсене пурнăçлама халăх хăй хутшăнма тăрăшать. «Вырăнти пуçарусемпе Чăваш Республикин территорийĕнче проектсене пурнăçласси» йышăнăва тĕпе хурса 2021 çулта Енĕш салинче пуçаруллă бюджет программипе пĕвене тасатма, дамбăна çирĕплетме май килчĕ. 350 пин тенкĕлĕх. 70 пин тенкине халăх хăй хыврĕ. Пĕлтĕр ку программăпа тепĕр проекта пурнăçлама пултартăмăр – Çĕн Сăрьел ялĕнче те пĕвене тасатса хăтлăх кĕртрĕмĕр. Çав тери калăпăшлă ĕç пулчĕ. Ял çыннисем 296 пин ытларах тенкĕ пуçтарчĕç, çавна май республика та, район та пысăк бюджет уйăрчĕ, – пĕлтерчĕ Уйкас Кипек территори пайĕн пуçлăхĕ Александр Петров.

2021 çулта Республика Пуçлăхĕ кашни яла 100 пин тенкĕ уйăрса пачĕ. Çак укçа-тенкĕпе Уйкас Кипек, Услантăр Енĕш тата Кивçурт Енĕш ялĕсенче ача-пăча тата спорт площадкисем тунă. Вăрман-кипексем, çĕн-сăрьелсем, енĕшсем ку пулăшупа уй хапхисене вырнаçтарма килĕшнĕ.

Юлашки вăхăтра хуçалăхсенче кăна мар, ялсенче те лашасем тытма пăрахнăччĕ. Уйкас Кипек тăрăхĕнче ку ĕçе пултаруллă çамрăк Вадим Чикмяков пуçарса янă. Вăл хăйĕн хуçалăхĕнче 28 лаша усрать. Ку çеç те мар, тырпул, нумай çул ӳсекен курăксем çитĕнтерес енĕпе те тăрăшса ĕçлет. Çакă та ял аталаннин палли ĕнтĕ.

– Ял çамрăкĕсем маттур пулнипе эпир чăннипех мухтанма пултаратпăр. Кăçал, акă, Уйкас Кипек хастарĕсем февральте хăйсем укçа-тенкĕ пухса пĕвене тасатрĕç, çуркунне унта пулăсем ячĕç, – кăмăллăн пĕлтерчĕ территори пайĕн пуçлăхĕ Александр Петров.

Вăрман Кипек çыннисем те маттур. Вĕсем те пĕрле пухăнса нимелле ял пуçне стела вырнаçтарнă. Вăл хăйнеевĕрлĕ часовня пекех, кунта турăш валли те вырăн уйăрнă.

Масарсене тирпейлесе тăрасси те тимлĕхре. Вăрман-кипексем, акă, кăçал кран тара тытса çӳллĕ, хăрнă йывăççене тасатнă. Кунта вицĕ хутчен субботниксем йĕркеленĕ. Кун пек ĕççене çулсерен Уйкас Кипек территорийĕнчи тăвату масар çинче ирттереççĕ.

Çулсем те тимлĕхре. Уйкас Кипек тăрăхĕнче вырăнти çулсем 15,2 километра тăсăлаççĕ. «Пахалăхлă тата хăрушсăр çулсем» наци проекчĕпе килĕшӳллĕн пĕлтĕр Енĕш салинчи М.Горький урамĕнчи çула юсанă. 300 метра çĕнетме 718 пин ытларах тенкĕ уйăрнă. Кăçал та ку урамра ĕççем тăсăлнă, тата тепĕр 235 метр çула юсама май килнĕ. Вицĕмçул наци проектне пулах Уйкас Кипекри Ленин урамĕнчи



Уйкас-кипексем Акатуй уявĕнче. А.Петров сулахайран пĕрремĕшĕ.



Вăрман-кипексем пĕтĕм ĕçе йышпа тăваççĕ.

310 метр çул якалнă.

– Малараххи çулсенче ку тăрăхра пурăнакансем мобильлĕ çыхăну япăх пулнишĕн пăшăрханатчĕç. «Цифровая экономика» наци проекчĕ йĕркипе ялсенче те цифра танмарлăхне пĕтерес программăна хутшăнса вицĕмçул Уйкас Кипекре, кăçал Енĕшре Ростелеком вышкисене лартрăмăр. Халĕ çынсем интернета çăмăллăнах, лайăх хăвăртлăхпа тухма май пурришĕн савăнаççĕ, – пĕлтерчĕ Александр Петров.

«Экологи» наци проекчĕ те ялсенче паян тухăçлă ĕçлет.

**Кивçурт Енĕшре пурăнакан Раиса СЕРГЕЕВА:**



**– Эпĕ нумай çул Мускавра пурăннă хыççăн çуралнă яла таврăнтăм. Малараххипе хальхине танлаштармалăх пур. Пилĕк çул каялла пирĕн ялта çулла та çăрăлчăк вырăнсем пурччĕ, çумăрлă çанталăкра кĕрсе тухма çав тери кансĕрччĕ. Çуркуннехи-кĕркуннехи вăхăтра çынсем машинисене ял вĕçнех лартса хăваратчĕç. Халĕ, ак, федераллă программăна кĕрсе вак чулпа хытарнă çул ял витĕр тăршшĕпех иртет. Ентешсем маттур, çуралнă тăрăхшăн хытах тăрăшаççĕ. Халăха ырă шухăшсемпе ертсе пыракан та кирлĕ. Турра шĕкĕр, пирĕн ялта çакнашкал хастар пур. Вăл округ депутачĕ Вячеслав Алексеев. Çынсене патшалăх программисене кĕрсе аталанма май пуррине ăнлантарать.**

Çӳп-çап реформи çынсен культура шайне ӳстерчĕ темелле. Халĕ малтанхилле çырмасенче, вăрман-посадка хĕррисенче ăпăр-тапăр куписем самаях сахалланчĕç. Уйкас Кипек тăрăхĕнче, акă, ТКО площадкисене 19 вырăнта йĕркеленĕ, вĕсенче пĕтĕмпе 38 евроконтейнер вырнаçтарнă. Ял çыннисем çӳп-çапа вăхăтра тиесе тухнăшăн хĕпĕртеççĕ.

Паллах, малашлăх планĕсем те пĕчĕк мар. Уйкас Кипекре, акă, «Культура» наци проекчĕпе çĕнĕ клуб тума палăртнă. Ăна ял çыннисем чăтăмсăррăн кĕтеççĕ. Ку тăрăхра культура мероприятийĕсем çулсерен хастар иртеççĕ. «Кипек ен» ушкăна таврара та аван пĕлеççĕ. Ун йышне кĕрекен артистсем пултарулăхĕпе округри, республикăри мероприятисен сценисем çине тухаççĕ. Ертӳçи Лидия Михайлова çавăн пекех районти культура çумĕнчи «Санар» фольклор коллективĕпе ытти регионсене те тухса çӳрет.

Тĕрĕссипе, Уйкас Кипек тăрăхĕнчи культура чунĕллĕ çынсем пур мероприятире те пĕрле. Нумаях пулмасть Кивçурт Енĕшри Совет Союзĕн Геройĕ С.И.Илларионов ячĕллĕ музейăн 5 çулхи юбилейне йышпа паллă турĕç. Чăваш йăлисене аса илсе вырма, авăн йăлисене кăтартрĕç.

Чăнах та, наци проекчĕсем, регион программисем пулăшнипе ырă улшăнусем куç умĕнчех. Ялсене хитре çуртсем, таса урамсем илĕртеççĕ.

Уйкас Кипек тăрăхĕ хитре вырăнта вырнаçнă. Юнашарах вăрман, пĕвесем йăлтăртатса илĕртеççĕ, плотинасем пур, улăх-çаран енчен пуян, уйĕсем таса та анлă... Кунта хăнасене ялан таравать!

**Светлана ЧИКМЯКОВА**




Çĕнĕ стела.



Вăрман Кипекри кĕпер юсавĕ.



Енĕшсене – наци проекчĕпе телевышка тата çĕнĕ çул.



Уйкас Кипек тăрăхĕнче лашасем усраççĕ.